28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 АВГУСТ 29 ЮНКУН 167(6918) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Государствӑна тырӑ памалли графика тултарса пырасси—кашни колхозӑн чи таса тивӗҫӗ

Ялхуҫалӑх продукчӗсене обязательствӑсем тӑрӑх государствӑна пӗтӗмпех тата вӑхӑтра парса татасси колхозсен ҫирӗп законӗ, чи малтанхи тивӗҫӗ пулса тӑчӗ. Нумай колхозсем уйран тырпул пухса кӗртме тытӑннӑ хыҫҫӑнах государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗҫ.

Малта пыракан колхозсем тӗпӑтырӑсене вырса пӗтереҫҫӗ те ӗнтӗ, вӗсем халӗ хӗрсех авӑн ҫапаҫҫӗ, государствӑна тырӑ леҫсе параҫҫӗ. Ҫакӑн пек колхозсем хӑйсен ӗҫ планӗнче государствӑна тырӑ парса татассине чи малти вырӑна ҫырса хунӑ.

Эпир хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыв умӗнче тырпула хӑвӑрт тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗме, тырӑ вырма тытӑнсан малтанхи кунсенчен пуҫласах государствӑна тырӑ парас ӗҫе организацилеме сӑмах паттӑмӑр.

Нумай колхозсем вӑрнарсем тата Воронеж облаҫӗнчи Ильич ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем тырӑ вырма пуҫланӑ хыҫҫӑн 5 кунран кая юлмасӑр авӑн ҫапма тытӑнма, авӑна массӑллӑн ҫапассине кая хӑвармалла мар тесе чӗнсе калаҫинне йышӑнса социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ. Вӗсем ӗҫе кирлӗ пек организацилесе пур ӗҫсене те план тӑрӑх туса пыма, государствӑна срокчен тырӑ парса татма сӑмах пачӗҫ.

Тырӑ вырма пуҫлани уйӑх та иртсе кайрӗ ӗнтӗ, анчах та государствӑна тырӑ парас ӗҫ чӑтма ҫук япӑх пырать-ха. Августӑн 25-мӗшӗ тӗлне республикипе тырӑ памалли ҫулталӑкри плана пӗтӗмпе те 8 процент ҫеҫ тултарнӑ. Кувакино районӗ вара 0,9 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫ йӗркеллӗ пултӑр тесе, кашни района, кашни колхоза тырӑ леҫсе памалли график туса панӑ. Анчах та августӑн 20-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче государствӑна тырӑ памалли графика пирӗн республикӑра пӗтӗмпе те Ҫӗнтӗрвӑррипе Етӗрне районӗсем ҫеҫ тултарнӑ. Кувакино, Йӗпреҫ, Вӑрмар, Канаш, Ишлей, Элӗк, Пӑрачкав, Ҫӗмӗрле районӗсем графикӑн ҫур пайне те тултарайман.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫ хӑвӑртлӑхӗ пӗтӗмпех ӗҫе тӗрӗс организацилененинчен килет. Акӑ, Вӑрнарпа Йӗпреҫ районнех илер. Вӑрнар районӗ ҫав ҫӳлте асӑннӑ пилӗк кун хушшинче 366 тонна, Йӗпреҫ районӗ 67 тонна тырӑ леҫсе панӑ. Ҫак икӗ районра та тырӑ пӗр вӑхӑтрах пулса ҫитнӗ, вӗсен иккӗшӗн те тырӑ леҫсе памалли условисем пӗр пекех. Анчах та мӗншӗн йӗпреҫсем государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе кайра пыраҫҫӗ-ха? Мӗншӗн тесен Йӗпреҫ районӗнче тырпул пухса кӗртес ӗҫе тивӗҫлипе организацилемен, кунта колхозри ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ, колхозниксене уйра иртен пуҫласа ӗҫлеттерес тесе нимӗн те тумаҫҫӗ, колхозниксем колхоз ӗҫӗнчен пӑрӑнаҫҫӗ.

Кувакино районӗ августӑн 20-мӗшпе 25-мӗш хушшинче пӗтӗмпе 12 тонна ҫеҫ тырӑ леҫсе панӑ, ҫав вӑхӑт хушшинчех тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе 7,1 процент, авӑн ҫапас тӗлӗшпе 0,6 процент ӳсӗм тунӑ.

Пирӗн колхозсенче, партипе правительство хушнӑ тӑрӑх, 18 кун хушшинче тырпула уйран пухса кӗртмелле. Тырпула ҫӳлте асӑннӑ хӑвӑртлӑхпа пухса пырсан вара Кувакино районӗнче 3 уйӑх хушши ытларах тырӑ вырмалла пулать.

Ҫавӑн пекех государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе, асӑннӑ районсем пуҫне, Чкаловски, Первомайски тата ытти районсем те юлса пыраҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ колхозсенче авӑн ҫапса государствӑна тырӑ памалли хӗрӳллӗ ӗҫ тапхӑрӗ пуҫланчӗ. Халӗ ӗнтӗ ку ӗҫе пӗр куна та, пӗр сехете те вӑраха хӑварма юрамасть.

Государствӑна тырӑ памалли графика тултарса пырас тесен, авӑн ҫапакан машинӑсене ҫӗрӗн-кунӗн ӗҫлеттермелле, ку ӗҫе ялти пур ҫынсене те хутшӑнтармалла, кӗлте турттарнӑ, государствӑна тырӑ леҫсе панӑ ҫӗрте колхозри мӗнпур чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе, кӳлме вӗрентнӗ ӗне-выльӑхсемпе туллинрех усӑ курмалла.

Партипе комсомол организацийӗсен, вырӑнти советсемпе ҫӗрӗҫ органӗсен задачи — колхозлӑ ялӑн мӗнпур вӑйне тырпула ӑнӑҫлӑн пухса кӗртсе государствӑна срокчен тырӑ парса татас ӗҫе мобилизацилесси пулса тӑрать.

И. В. Сталин Гарриман господина йышӑнни

Августӑн 27-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ Генералиссимус И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посолне В. А. Гарриман господина йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов пулнӑ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Генералиссимусне СТАЛИН юлташа

Сире, Сирӗн урлӑ вара мӗнпур совет халӑхне юлашки агрессора—фашистла Японие татӑклӑнах ҫӗнтернӗ ятпа сывлӑх сунса саламлатӑп. Эсир ертсе пынӑ Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн ҫав тери паха ҫӗнтерӗвӗпе хаяр тӑшмана, Монголи чиккинчен пирӗн ирӗклӗхе, никама пӑхӑнманлӑха, пирӗн чаппи культурине хӑратса тӑнӑскере, парӑнтарнӑшӑн мӗнпур монгол йӑхӗсем чӑнлӑн хаваслӑхне Сире каласа пӗлтеретӗп.

Пирӗн халӑх тата пирӗн ҫар тӗнчери ирӗклӗхе юратакан халӑхсен ҫак кӗрешӗвне вӑй ҫитнӗ таран хутшӑннишӑн тивӗҫлипех мухтанать.

Ҫавӑн пекех тата эпир пирӗн ҫарӑн вӑрҫӑри пахалӑхне Эсир хӑвӑрӑн приказӑрта пысӑк хак панӑшӑн савӑнса мухтанатпӑр.

Ҫак ҫӗнтерӳ ячӗпе Сире сывлӑх сунса саламлатӑп, монгол халӑхӗпе совет халӑхӗ хушшинчи туслӑх ӗмӗр-ӗмӗр ҫирӗп пулӗ тесе шантарса калатӑп.

Премьер-министр,
Монголи халӑхӗн революциллӗ ҫарӗн Главнокомандующийӗ
Маршал ЧОЙБАЛСАН.

Монголи Халӑх Республикин Премьер-министрне ЧОЙБАЛСАН Маршала

УЛАН-БАТОР

Япони агрессорне ҫӗнтернӗ ятпа сывлӑх сунса саламланӑшӑн Сире чӗререн тав тӑватӑп, ҫавӑн пекех тата Сире хӑвӑра та ҫӗнтерӳ ячӗпе сывлӑх сунса саламлатӑп.

Монголи халӑхӗн революциллӗ ҫарне, Хӗрлӗ Ҫарпа ҫумма-ҫуммӑн тӑрса кӗрешнӗскере, Япони империализмне аркатса тӑкас пӗтӗмӗшле ӗҫе пысӑк вӑй хунӑшӑн Совет правительстви тав туса ялана асра тытса тӑрать. Совет Союзӗ тата никама пӑхӑнман Монголи Халӑх Республики хамӑрӑн халӑхсен ырлӑхӗшӗн хамӑрӑн ҫӗршывӑмӑрсен тӑшманӗсене хирӗҫ малашне те пӗр шутлӑ пулса кӗрешессине эпӗ шанса тӑратӑп.

И. СТАЛИН.

РУМЫНИРИ СОВЕТ МИССИНЕ ТАТА РУМЫНИН ССР СОЮЗӖНЧИ МИССИНЕ УЛӐШТАРСА ПОСОЛЬСТВӐСЕМ ТУНИ

Совет Союзӗпе Румыни хушшинче дипломатиллӗ ҫыхӑну ҫӗнӗрен пуҫланса кайнине пула, СССР Правительствипе Румыни правительстви Румынири совет миссине тата Румынин Совет Союзӗнчи миссине улӑштарса посольствӑсем тума килӗшнӗ. Ҫак икӗ ҫӗршывӑн посланникӗсене те вара посолсен ятне панӑ. (ТАҪС).

„Пекарь“ артеле Хӗрлӗ Ялав пани

Ҫак кунсенче «Пекарь» артель членӗсен савӑнӑҫлӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта артеле Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пачӗҫ.

— Сирӗн артель,—терӗ пухура РСФСР Совнаркомӗ ҫумӗнчи промкооперации управленийӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗн заместителӗ Климов юлташ, —юлашки уйӑхӗнче мӗнпур продукци туса кӑлармалли плана икӗ хута яхӑн, куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли плана икӗ хут ытла ирттерсе тултарчӗ. Ҫавӑншӑн пирӗн артель Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата 8 [illegible] тенкӗ премине илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫавӑн пекех ҫав Хӗрлӗ Ялава Шупашкарти Куйбышев ячӗпе тӑракан артельрен илсе, сире паратпӑр.

Климов юлташ Хӗрлӗ Ялава «Пекарь» артель правленийӗн председательне И. Петров юлташа парать. Петров юлташ, ялава илсе, артель членӗсен ячӗпе ответлӑ сӑмах калать:

— Пирӗн коллектив,—тет вӑл,—Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура пархатарлӑ ӗҫлет. Кӑҫал эпир хамӑр правительствӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне 4 хутчен илтӗмӗр. Ялав илни пире татах та тимлӗнрех ӗҫлеме хушать.

Артель коллективӗ, Хӗрлӗ Ялав илни ҫине ответлесе, Октябрь революцин 28 ҫул тултарнине ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме пулчӗ.

Пуху хупӑнас умӗн социализмлӑ ӑмӑртура уйрӑмах палӑрнӑ артель членӗсене премисем пачӗҫ.

Тырпул тӑккаланни кашни колхознике сиен кӳрет, вӑл ӗҫкунӗн йывӑрӑшне чакарать

Ҫамрӑксем тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ

Ишлей районӗнчи «Парижска Коммуна» колхоз (председателӗ Р. Кудряшов юлташ) тырпул пухса кӗртессипе малта пырать. Колхоз кӗрхи тырӑсене вырса пуҫтарчӗ, ҫуртыррисене те ҫак кунсенчех вырса пӗтереҫҫӗ. Колхоз ыраш вырма тухнӑ малтанхи кунех авӑн ҫапас ӗҫе организациленӗ. Кунта кунӗн-ҫӗрӗн авӑн ҫапаҫҫӗ. Авӑн ҫапас ӗҫре уйрӑмӑнах комсомолец Ю. Шляхин юлташ ертсе пыракан 1-мӗш бригада малта пырать. Ку бригада паянхи куна 35 гектар ҫинчи тырра ҫапнӑ. Бригадӑри Р. Ергунова, Л. Ергунова, У. Сарафанова, Ф. Созонова комсомолкӑсем икӗ сменӑпа ӗҫлеҫҫӗ. Машинистка М. Шорникова юлташ кулленхи нормӑна 130—150 процент тултарса ӗҫлет. Тӑватӑ лашапа ӗҫлекен молотилкӑпа кунне нормӑпа пӑхнинчен икӗ хут ытларах ҫапаҫҫӗ.

Колхоз авӑн ҫапнӑ вӑхӑтрах государствӑна тырӑ парас ӗҫре те, пилӗк кунхи графика ытлашшипех тултарса пырать.

Колхозра массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе те лайӑх йӗркеленӗ. Кашни бригадӑрах агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ. А. Виноградова, Ф. Сасонова агитаторсем колхозниксем хушшинче тӑтӑшах калаҫусем ирттереҫҫӗ, хаҫат вуласа параҫҫӗ. Бригадӑсенче «Боевой листоксем» кӑлараҫҫӗ. Кунта тырпул пухса кӗртме тытӑннӑранпа 28 номер «Боевой листок», 8 номер стена хаҫачӗ кӑларнӑ. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйӗпе спектакльсем лартса параҫҫӗ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Мӗншӗн колхоз кая юлса пырать?

Первомайски районри Анат Тӑрмӑш ял Советне кӗрекен Ленин ячӗпе тӑракан колхоз тырпул вырма кая юлса тухрӗ. Кунта тырӑ вырма августӑн 12-мӗшӗнче, ытти колхозсенчен 5 кун кайран тухрӗҫ. Тырӑ вырнӑ ҫӗрте ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ, дисциплина начар, чылай колхозниксем нормӑна тултараймаҫҫӗ. Кӑҫал уйхир ӗҫӗнче колхозӗпе 150 ҫын ытла ӗҫлемелле, анчах ӗҫе 70—80 ҫынран ытла тухмаҫҫӗ.

Ку вӑл колхоз правленинче йӗркелӗх ҫуккинчен нумай килет. Колхоз председателӗ С. Петров ӗҫке ярӑннӑ пирки, колхозри ӗҫе организацилемест. Акӑ августӑн 12—13-мӗш кунӗсенче Петров ыраш вырнӑ ҫӗрте ӗҫлекен ӗҫ лашисене илнӗ те вӗсемпе вӑрманти утартан вӗллесем куҫарнӑ ҫӗрте усӑ курнӑ. Колхоз председателӗ ҫапла хӑтланнине кура вара бригадирсем те хӑйсемшӗн ӗҫлеҫҫӗ. 1-мӗш бригадӑн бригадирӗ А. Яковлев августӑн 17—18-мӗшӗсенче икӗ кун хушши колхозниксене тырӑ вырнӑ ҫӗртен илсе хӑй валли утӑ ҫултарнӑ. Вӑл ҫак ӗҫе нимелле тунӑ пулин те, хӑй апатне мар, колхоз апатне ҫитернӗ. Ниме ӗҫкине А. Яковлев патне С. Петров та пырса ӗҫнӗ.

Ҫакӑн пек ӗҫлесе пынине пула ӗнтӗ колхоз тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе те, кӗрхи тырӑсене акас тӗлӗшпе те кая юлса пырать. Государствӑна тырӑ памалли график пурнӑҫланса пымасть. Анчах ҫав вӑхӑтрах колхоз председателӗ С. Петров кӑҫалхи тырра 544 килограмм салатса янӑ.

Августӑн 19-мӗшӗнче ҫанталӑк уяр тӑнӑ пулин те нумай колхозниксем ӗҫе тухман, ӗҫе пурӗ те 60 колхозник яхӑн ҫеҫ тухнӑ.

ВКП(б) райкомӗпе райисполком Ленин ячӗпе тӑракан колхоз мӗншӗн юлса пынине пӗлеҫҫӗ, анчах ӗҫе йӗркелесе ярассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

М. ЧАКАНОВ.

Плана тултарса пырасси—кашни колхозӑн ответлӑ задачи

МУРКАШ, августӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче калама ҫук чаплӑ ҫӗнтерӳ тунипе хавхаланса колхозниксемпе колхозницӑсем ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ ӗҫ нормине тултарайман колхозниксем районра питӗ сахал. Энгельс ячӗпе тӑракан колхозра ҫурхи тӗштырӑсене паян-ыран вырса пӗтереҫҫӗ. Герасимов тата Н. Семенов машинистсем жнейкӑпа кунне 4 гектар вырӑнне 8—9 гектар выраҫҫӗ. А. Стаханова, Ф. Иванова, А. Кузьмина юлташсем машинӑпа вырнӑ тырра ҫыхаҫҫӗ, вӗсем те хӑйсен нормине 130—150-шар процент тултараҫҫӗ. 76 ҫулти Федосия Митрофанова ҫуртыррисене ҫурлапа вырать, вӑл хӑш вӑхӑтра яла таврӑннине те пӗлме ҫук. Вӑл кашни кунах 0,15—0,20 гектар вырать. Колхоз государствӑна памалли графика та иртерсе тултарать.

Анчах та районра государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе чӑтма ҫук юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Знамя», «Социализм», «Комбайн» колхозсем паянхи кун тӗлне те государствӑна тырӑ леҫмен.

«Зерно» колхоз (председателӗ Васильев юлташ) ыраш та вырса пӗтермен. Ульянов ячӗпе тӑракан колхозӑн вырмалли ыраш тата 30 гектар ытла шутланать. Ҫак колхоз та государствӑна тырӑ памалли графика ҫуррине те тултарман. Ҫав вӑхӑтрах, партипе правительство постановленине пӑсса, колхозниксене аванс шучӗпе 2 центнер ытла тырӑ валеҫсе панӑ. «Торино» колхоз (председателӗ Тимофеев юлташ) ҫак вӑхӑта ҫитсе те государствӑна 4 центнер кӑна тырӑ панӑ. «Труд» колхоз та 200 центнер парас вырӑнне 85 центнер кӑна панӑ.

Районри кашни колхозӑн государствӑна тырӑ памалли графика тултарса пыма пур условисем те ҫителӗклӗ. Ӗҫе пӗлсе организацилени тата мӗнпур колхозниксене тырпул пухса кӗртес ӗҫе мобилизацилени кӑна кирлӗ.

Ф. ИВАНОВ.

Ӗҫ дисциплини ҫук ҫӗрте

ШӐХАСАН. Атнашри Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн кӑҫал 753 гектар тырпул пухса кӗртмелле. План тӑрӑх ҫак ӗҫсене туса пыма уй-хирте кашни кун 465 колхозник ӗҫлемелле. Колхозра ӗҫлеме пултаракан ҫакӑн чухлӗ ҫын пур, анчах та ӗҫе вӗсем начар хутшӑнаҫҫӗ.

Киров ячӗпе тӑракан колхоз тырӑ вырма августӑн 7-мӗшӗнчех тухнӑ пулсан та паянхи куна ҫуртыррисене вырса пӗтермен. Колхоз руководителӗсем колхоз тырпулне хӑвӑрт пухса кӗртес тӗлӗшпе ӗҫе лайӑх организацилеменнине пула, уйри тырӑ тӑкӑна пуҫларӗ. Л. Семеновпа М. Каховская бригадинчи колхозниксем ӗҫе кая юлса тухаҫҫӗ, ӗҫрен хӗвел аничченех кӗреҫҫӗ. Ҫавӑн пирки ку бригадӑсенчи колхозниксем ӗҫ нормисене тултараймаҫҫӗ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ӑнса пулнӑ тырпула пухса кӗртес ӗҫе пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлес вырӑнне Шӑхасанпа Канаш пасарӗсене кайса ҫӳреҫҫӗ.

Колхозри партипе комсомол организацийӗсем ӗҫе хӑвӑртлатас тата ӗҫ пахалӑхне ӳстерес тӗлӗшпе ертсе пымаҫҫӗ. Партипе правительство тырпула хӑвӑрт та пӗр тӑккаксӑр пухса кӗртес тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисене колхозниксене ӑнлантарса паман, ялта агитмассӑллӑ ӗҫ начар пырать. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Киров ячӗпе тӑракан колхозра кашни гектар ҫине 3 центнер ытла тырӑ тӑккаланса юлать. Тӑкӑннӑ пучахсене пухмаҫҫӗ.

Государствӑна тырӑ памалли графика калама ҫук тӑсса пыраҫҫӗ. Августӑн 26-мӗшӗ тӗлне ку колхозӑн 350 центнер тырӑ леҫмелле пулсан, вара колхоз 100 центнертан та сахалтарах леҫнӗ.

Авӑн ҫапассипе ыраш акасси те чӑтма ҫук кая юлса пырать. 351 гектар вырӑнне пӗтӗмпе те 200 гектар анчах акнӑ. Тракторпа сухаласа пӑрахнӑ ҫӗр участокӗсем вӑхӑтра акман пирки типсе [illegible]ҫҫӗ.

— Манӑн ӗҫлекен ҫынсем ҫитмеҫҫӗ,— тесе ответлет колхоз председателӗ В. Степанова юлташ. Анчах та ӗҫе кирлӗ пек организацилес тӗлӗшпе тата ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес енӗпе хӑй нимӗн те тумасть.

Мӗн шухӑшлаҫҫӗ-ши Шӑхасан райкомӗпе райсовет исполкомӗн руководителӗсем Киров ячӗпе тӑракан колхозри ӗҫе йӗркелесе ярасси ҫинчен?

Г. ИСАЕВ.

Ҫӗнтерӳҫӗ-воинсем тырпул пухса кӗртес ӗҫре

Чкаловски районри Анат Тусари «Гвардеец» колхозӑн уйхирӗсенче кӑҫал вӑйлӑ тырпул ӳссе ҫитӗнчӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн калама ҫук чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницӑсем кунӗн-ҫӗрӗн тырпул пухас ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ. Кӑҫал уйрӑмӑнах ҫамрӑксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем час-часах эрнипех яла таврӑнмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те пысӑк, кулленхи нормӑна тултарайман колхозниксем ҫукпа пӗрех.

Ытти колхозниксемпе пӗрле ҫӗнтерӳҫӗ-воинсем те тырпул пухса кӗртес ӗҫе хастарлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ыраш вырма тытӑннӑ кунсенче Н. И. Кузнецов, Ф. И. Колпаков, В. Т. Козлова, Л. А. Александрова юлташсем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнчӗҫ. В. Т. Козлова юлташ 1-мӗш бригадӑра звеновод пулса ӗҫлет. Вӑл ертсе пыракан звено колхозра малта пыракан звено шутланать. Кунти кашни колхозникпа колхозница хӑйсен кулленхи нормине 150—200 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Н. И. Кузнецов тата Ф. И. Колпаков юлташсем те тырпул пухса кӗртес ӗҫе лайӑх хутшӑнаҫҫӗ. Час-часах вӗсем фашистла Германие хирӗҫ мӗнле ҫапӑҫни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Ҫӗнтерӳ тунӑ ятпа пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнма, тырпула вӑхӑтра пухса кӗртме, хамӑр ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне татах та ӳстерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеме чӗнеҫҫӗ. Вӗсен сӑмахӗсем витӗмлӗ. Ҫавӑнпа та колхозниксем вӗсем каласа панине чун-чӗререн юратса итлеҫҫӗ, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

«Гвардеец» колхоз районра ытти колхозсенчен маларах ыраш вырса пӗтерчӗ, халӗ ҫурхи тӗштырӑсене те паян-ыран вырса пӗтерет. Халӗ хӗрсех авӑн ҫапаҫҫӗ. Уяр ҫанталӑкпа тулли усӑ курас тесе, кӑнтӑрла та ҫӗрле те ҫапаҫҫӗ. Ыраш акас ӗҫ те вӗҫленсе пырать. Колхоз государствӑна тырӑ памалли графика тултарса пыма пуҫларӗ.

— Эпир Отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ ҫулсенче те начар мар ӗҫлерӗмӗр. халӗ, фашистла Германие аркатса тӑкнӑ ҫул тата Япони агрессорне пӑхӑнтарса чӗркуҫҫи ҫине лартнӑ вӑхӑтра, начар ӗҫлеме пултараймастпӑр, — тет «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» ятлӑ медальпе наградӑланӑ колхоз председателӗ Баранов юлташ.

Л. ПАВЛОВА.

Йӗтӗн-кантӑра вӑхӑтра пухса кӗртер

Пирӗн республикӑри колхозсенче йӗтӗнпе кантӑр лайӑх ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Халӗ нумай колхозсенче йӗтӗн татаҫҫӗ, пусана шыва хутаҫҫӗ, шывран кӑларнӑ пусана тылласҫӗ. Элӗк районӗнчи колхозсем тылламан кантӑр пусине пенькозавода леҫеҫҫӗ. Елчӗк районӗнчи «Осоавиахим», «Красный восток» тата Пушкин ячӗпе тӑракан колхозсем августӑн 20-мӗшӗ тӗлнех государствӑна сӳс-кантӑр памалли плана парса татнӑ, халӗ тырӑ парас вырӑнне сӳс параҫҫӗ. Вӑрмар, Ҫӗрпӳ тата ытти хӑшпӗр районсенчи колхозсем те сӳс памалли обязательствӑсене пурнӑҫланӑ. Йӗтӗне ҫапса унӑн вӑрлӑхне пама тытӑннӑ.

Анчах та республикӑри чылай колхозсенче йӗтӗн-кантӑр пухса кӗртес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ тӗслӗхсене курма пулать. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Новая жизнь» колхозра 2 гектар ҫинчи лайӑх ӳсе ҫитнӗ кантӑра лаша таптаса ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Ҫакӑн ҫинчен район руководителӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ, анчах та кантӑра таптаттаракансене ответ тыттарас тӗлӗшпе нимӗн те туман. Государствӑна обязательство тӑрӑх сӳспе кантӑр вӑрри вырӑнне тырӑ пама хушнӑ Чкаловски районра та кантӑр пухса кӗртес ӗҫе иккӗмӗш черетри ӗҫ ҫине пӑхна пек пӑхаҫҫӗ. Район кантӑр акмалли плана пурӗ те 61,7 процент кӑна тултарнӑ. анчах та акнӑ кантӑра та вӑхӑтра ҫумласа тасатман тата пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫе организацилемен. Хӗрлӗ Чутай, Первомайски, Шӑмӑршӑ тата ытти районсенче те кантӑр акмалли плана тултарман тата пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе те ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ хӑйӗн постановленийӗнче сӳс-кантӑр туса илес ыйтӑва пысӑк вырӑна хурса, кантӑр акакан район руководителӗсене, ҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсене тата колхоз председателӗсене кантӑр-йӗтӗн туса илес тӗлӗшпе пикенерех ӗҫлеме, кантӑр агротехникине пурнӑҫласа пыма, кантӑра вӑхӑтра пухса илсе шыва хутса тылласине организацилеме хушрӗ.

Кантӑр тата йӗтӗн сӳсӗ колхозпа колхозниксен хуҫалӑхӗнче кӑна мар, государствӑшӑн та пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне, кантӑр тата йӗтӗн колхоз хуҫалӑхӗнче пысӑк тупӑш паракан культурӑсем пулса тӑраҫҫӗ. Кантӑрпа йӗтӗн сӳсне тырӑ памалли обязательство шутне кӗртеҫҫӗ. Пӗр центнер сӳсе 5 центнер тӗштырӑ вырӑнне, пӗр центнер тылламан кантӑра 50 килограмм тӗштырӑ вырӑнне илеҫҫӗ. Пӗр центнер йӗтӗн сӳсне 4 центнер тӗштырӑ вырӑнне, пӗр центнер тылламан йӗтӗне 40 килограмм тӗштырӑ вырӑнне шутлаҫҫӗ. Пӗр центнер кантӑр вӑррине государство обязательстви тӑрӑх е МТС ӗҫленӗшӗн натуроплата вырӑнне памалли тырӑшӑн 2 центнер вырӑнне шутлаҫҫӗ.

Кантӑр тата йӗтӗн сӳсӗпе вӑрлӑхӗ хуҫалӑхра та питӗ кирлӗ. Ҫавӑнпа та кашни колхозӑн кантӑра тата йӗтӗне вӑхӑтра татса пухассишӗн кӑна мар, ӑна сийӗнчех ҫапассишӗн тата шыва хутса, типӗтсе тылласшӗн тӑрӑшса ӗҫлемелле. Иртнӗ ҫул чылай колхозсем кантӑрпа йӗтӗне вӑхӑтра шыва хутса пултарайман пирки пысӑк сиен курчӗҫ. Вӑл йӑнӑшсене кӑҫал тумалла мар. Кантӑра тата йӗтӗне вӑхӑтра пухса кӗртес тӗлӗшпе ятарласа тунӑ звеносен пикенерех ӗҫлемелле. Кантӑра тата йӗтӗне пухса майлассишӗн колхоз председателӗсемпе бригадирсем те ответлӑ. Районри ҫӗрӗҫ тата партипе совет органӗсен техникӑллӑ культурӑсене пухса кӗртесси мӗнле пынине яланах контроллесе тӑмалла. Кашни колхозӑн кантӑра тата йӗтӗне вӑхӑтра пухса кӗртессишӗн тӑрӑшса ӗҫлемелле.

Н. МАЛЬЦЕВ.
«Заготлен» конторин управляющийӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 28-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 28-мӗшӗнче ИНҪЕТ-ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧИ 2-мӗш ФРОНТ ҫарӗсем САХАЛИН утравӗн кӑнтӑрти пайне Япони ҫарӗсенчен пӗтӗмпех тасатса пӗтернӗ.

КАМЧАТКӐРАН кӑнтӑр еннерехре фронт ҫарӗсем, Лӑпкӑ океанри флотпа пӗрле кӗрешсе, Курильски утравсен ушкӑнне кӗрекен ШИНШИРИ (СИНСИРУ-ТО), УРУП тата ТУРУП (ЭТОРОФУ) утравӗсене йышӑннӑ.

Августӑн 27-мӗшӗнче пирӗн ҫарсене японецсен салтакӗсемпе офицерӗсем 36.000 ҫын ытла тыткӑна парӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче пӑлла улшӑнусемех пулман.

Япони ҫарӗсен парӑнакан чаҫӗсемпе соединенийӗсене йышӑнас ӗҫ малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Ялпа колхоз строительстви ыйтӑвӗсемпе РСФСР Совнаркомӗнче пулса иртнӗ канашлу

Августӑн 24-мӗшӗнче Мускавра ялпа колхоз строительстви ыйтӑвӗсемпе РСФСР Совнаркомӗ пухнӑ канашлу хупӑннӑ. Вӑл виҫӗ кун пынӑ. Канашлу колхозниксен ҫурчӗсемпе хуҫалӑх хуралтисене, нимӗҫ оккупанчӗсем ишсе хӑварнӑскерсене, юсас ыйтӑва сӳтсе-явнӑ.

Ялпа колхоз строительстви управленийӗсен начальникӗсем тунӑ отчетсене илтленӗ. Иртнӗ икӗ ҫул хушшинче РСФСР-ӑн ирӗке кӑларнӑ районӗсенче 564 пин ҫурта юсанӑ е ҫӗнӗрен туса лартнӑ. Ҫак ҫуртсене 2,5 миллиона яхӑн ҫын вырнаҫнӑ. Строительство пуринчен ытла Мускав, Калинин тата Смоленск облаҫӗсенче ӑнӑҫлӑ пырать. Хӑшпӗр районсемпе ялсенче ҫуртсене вӑрҫӑчченхинчен нумай лайӑхрах туса лартнӑ. Вӑл ҫуртсене колхозниксен строительство бригадисем тӑваҫҫӗ. Вӗсем вырӑнти строительство материалӗсемпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ.

Колхозниксене государство нумай пулӑшать. Колхозниксен ҫурчӗсене юсама государство 300 миллион тенкӗ укҫа кивҫен панӑ.

РСФСР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ялпа колхоз строительстви управленийӗн начальникӗ В. Д. Иванов юлташ канашлура ҫакна палӑртнӑ: ҫӗртен тунӑ пӳртсенче пурӑнакан мӗнпур колхозниксене лайӑх ҫуртсене куҫармашкӑн сивӗсем киличчен 100 пин ҫурт ытла туса лартмалла. Стройматериал Халӑх Комиссариачӗпе Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗн тата промысла кооперацийӗн колхозниксене сӗтел-пукансем тата ҫавӑн пек ытти япаласем тума пулӑшмалла. Колхозсен стройматериалсем туртарма строительство бригадисене туртӑм вӑйӗ тата строительсене столяр инструменчӗсем памалла. Вырӑнсенче строитель-специалистсене—техниксене, десятниксене, плотниксен бригадирӗсене вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе анлӑн сарса ямалла.

Канашлура колхоз ялӗсен планӗсем ҫинчен тата ҫуртсен архитектури ҫинчен нумай калаҫнӑ. Архитекторсем колхозниксен пурӑнмалли ҫурчӗсен проекчӗсене туса хатӗрленӗ. Пурӑнмалли ҫуртсен тата колхоз ялӗсен планӗсен альбомне пичетлесе кӑларма хатӗрлеҫҫӗ. Анчах архитектура управленийӗ пурӑнмалли ҫуртсемпе хуҫалӑх хуралтисен проекчӗсене питӗ майӗпен хатӗрлет, колхозсене час ҫитермест.

Стройматериал Халӑх Комиссариачӗ черепица завочӗсемпе кирпӗч завочӗсем тӑвас ӗҫе начар сарса пырать.

Канашлӑвӑн юлашки ларӑвӗнче РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ А. Н. Косыгин юлташ сӑмах тухса каланӑ. Вӑл ҫакӑн ҫинчен каланӑ: РСФСР Совнаркомӗн ялпа колхоз строительстви пирки кӑҫал йышӑннӑ постановленийӗ колхоз ялӗсенче ҫӗнӗ строительствӑн тата ҫуртсене юсас ӗҫӗн пысӑк программине палӑртса хучӗ. Хальӗ промышленность мирлӗ вӑхӑтра кирлӗ продукци кӑларма хатӗрленет. Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗпе Стройматериал Халӑх Комиссариачӗ ялсене юсаса ура ҫине тӑратма кирлӗ продукци хальхинчен нумай ытларах туса кӑларма пултарасҫӗ ӗнтӗ. Ҫартан таврӑнакан воинсем ялти строительсен хисепне ӳстереҫҫӗ. Ҫакӑ строительство хӑвӑртлӑхне нумай ӳстерме тата ӗҫсен палӑртнӑ планне пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртме май парать.

Юлашкинчен канашлу облаҫсемпе районсен социализмла ӑмӑртӑвӗн условийӗсене сӳтсе-явнӑ. (ТАСС)

Макеев комбайнерӑн рекорчӗ

АЛМА-АТА, августӑн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Казахстанри комбайнерсен ӑмӑртӑвне пуҫласа яраканӗ Караганда облаҫӗнчи Ударнӑй МТС-ра ӗҫлекен комбайнер Михаил Макеев иртнӗ кунсенче, икӗ «Сталинец» комбайна пӗрле кӑкарса, пӗр кун хушшинче 105 гектар ҫинчи тырра пухса кӗртнӗ. Агрегатсен тухӑҫлӑхне кунран кун ӳстерсе пырса, вӑл пӗр кун хушшинче 110 гектар ҫинчи тулла пухса кӗртнӗ, ҫапла вара ҫӗнӗ рекорд тунӑ.

Тырӑ вырма пуҫланӑранпа кӑҫал Макеев 983 гектар ҫинчи тырпула пухса кӗртнӗ.

ВЫРĂС ХАЛĂХĔ ПУÇЛАНСА КАЙНИ

А. УДАЛЬЦОВ,
СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче вырăс халăхĕн историйĕпе ытларах та ытларах интересленме пуçларĕç, мĕншĕн тесен вăл Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ чухне ĕмĕрне ... ман паттăр та мухтавлă ĕçсем турĕ. Вырăс халăхне «çак вăрçăра пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем хушшинче Совет Союзĕн ертсе пыракан вăйĕ вырăнне хурса йышăнчĕç», терĕ Сталин юлташ майăн 24-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар командующийĕсен ячĕпе Кремльте пулнă йышăнура.

* * *

Аслă вырăс халăхĕ славян халăхĕн тăванла çемьине кĕрет. Археологи çакна кăтартса парать: вырăс халăхĕн авалхи аслашшĕсем питĕ ĕлĕк-авалах халĕ славянсем пурăнакан вырăнсенче пурăннă, тахçан ĕлĕк-авал питĕ анлă çĕрсене Лаба (Эльба) шывĕ таранах славянсем йышăнса тăнă, вара çав çĕрсене каярахпа çеç нимĕçсем—славянсен ĕмĕрхи тăшманĕ—тытса илнĕ. Вырăс халăхĕ яланах хăйĕн ĕмĕрхи çĕрĕн хуçийĕ пулнă, хăйĕн государствипе культурине хăй тĕллĕн туса пынă, хăйĕн никама пăхăнманлăхне пур тĕрлĕ агрессорсенчен те хӳтĕленĕ.

Славянсен, çав шутрах ĕнтĕ вырăс халăхĕн те ĕлĕк-авалхи аслашшĕсем хăйсен çĕрĕ çинче хальхи вăхăтран сахалтан та 5—6 пин çул ĕлĕкрех пурăннине тĕпчесе пĕлме пулать. Славянсем Европăра тата Малти Азире пурăннă авалхи халăх массинчен çĕрĕçĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăннипе уйрăм пулнă. Кунта, Днепр шывĕн вăтам пайĕпе Карпат тăвĕсем хушшинче ку вăхăтра, юнашар облаçсенчипе танлаштарсан, чылай çӳллĕ культура пулнă. Археологире çав культурăна «трипольски» тесе ят панă. Каярахпа славянсен çав питĕ ĕлĕк-авалхи аслашшĕсенчен ăрупа ăру темиçе хутчен те пĕтĕçсе кайнине пула тата пĕр-пĕринпе культура тĕлĕшĕнчен тăтăшах çыхăну тытса пынине пула, хальхи вăхăтри славян халăхĕсем пуçланса кайнă.

Пирĕн эрăн I-мĕш ĕмĕрĕ тĕлнелле славянсен авалхи аслашшĕсем хальхи вăхăтри Украинăна, Белоруссие тата унпа юнашар çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи облаçсене, тури Атăлпа тури Ока бассейнĕсене вырнаçса тухнă.

Авалхи славян халăхĕ пирĕн эрăн I-мĕш ĕмĕрĕ тĕлнелле хальхи Украинăпа Белоруссии территорийĕнче тата Атăлпа Ока шывĕсен тури пайĕсем таврашĕнче пуçланса кайнă.

Чи авалхи славян йăхĕсен аслашшĕсем пирĕн эрăччен пĕр 500 çул каярах Днепрăн вăтам пайĕнче, унчухнехи Скифи ятлă çĕршывра пурăннă сколот йăхĕсем тата Припятьрен çурçĕртерехре, Днепрăн тури пайĕнче, Атăлпа Окан тури пайĕсене ситпех сарăлса выртакан çĕр çинче пурăннă венед йăхĕсем пулнă. Çак тăванла икĕ халăх пурнăç йăлисем тĕлĕшĕпе тата культура тĕлĕшĕпе пĕр-пĕринне пĕрлешсе кайнинчен вара авалхи славян халăхĕ, каярахпа вырăс халăхĕ пулса кайнă. Сколотсемпе венедсем çĕр ĕçĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăннă. Вĕсем хушшинче сколотсен культури çӳлĕрех вырăнта тăнă, мĕншĕн тесен сколотсем мĕн ĕлĕк-авалтанпах кăнтăрта пурăнакан эллинсемпе çыхăну тытнă, «склавен» текен ята та вĕсене маларах панă.

Геродот историк каланă тăрăх, хăйсен çĕрĕç культури енчен сколотсем хушшинче «скиф-сухаçăсем» маларах тăнă. Каярахри авторсем вара вĕсене «палов», «спалеев», «полей» тесе ят панă. Пирĕн летописре вĕсене «поляна» тесе çырнă. Çаксем ĕнтĕ вырăнта пурăнакан пĕр тĕп халăхах пулнă пулмалла. Вĕсем хăйсен кӳршисенчен культури çӳлĕрех вырăнта тăнипе ĕлĕк-авалтанах уйрăм пулнă. Пĕр вăхăтра, пирĕн эра пуçланнă тĕлелле, вĕсем сколотсемпе венедсен чылай йăхĕсене хăйсем тавра пĕтĕçтерсе, вăрçăллă-ăруллă союз тунă пуль тесе шутлаççĕ. Çак союза пĕрлешнĕ хыççăн çав ăрусем пĕр-пĕринпе çывăхарасси, çапла вара авалхи славян халăхĕ пуçланса каясси питĕ хăвăрт пулса пынă. Пирĕн эрăн VI-мĕш ĕмĕрĕнче пурăннă Византи историкĕ Прокопий çапла шутланă: ĕлĕк-авал пур славян халăхĕсене те «спора» тесе чĕннĕ, славян халăхĕсем хăйсене «спала» тенĕ. Ку сăмах вĕсем хушшинче питĕ сарăлнă «исполин» сăмахран, пысăк, вăйлă тенине пĕлтерекен сăмахран тухса кайнă.

Славянсен çурçĕрте пурăннă чи авалхи аслашшĕсем—венедсем пĕр славянсен çеç мар, тата Балтика тăрăхĕнчи ытти халăхсен те: литовецсен, латышсен, авалхи прусецсен—Пруссири нимĕçсем вĕлерсе пĕтернĕ тĕп халăхăн—чи авалхи аслашшĕсем пулаççĕ пулмалла. Çак икĕ халăх пĕр-пĕринпе тăванла халăхсем пулаççĕ, вĕсем иккĕшĕ те истори тăршшĕнче хăйсен пĕтĕмĕшле чи авалхи аслашшĕсенчен—авалхи венедсенчен пуçланса кайнă. Каярахпа венедсем вара сколотсемпе пĕрлешнĕ хыççăн славян халăхĕ пулса кайнă. Славянсем тата Балтика тăрăхĕнчи халăхсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăнине чĕлхе тĕлĕшпе ĕçлекен ученăйсем Фортунатов, Шахматов, Соболевский, Ушаков т. ыт. те кăтартса параççĕ.

Авалхи славянсем, славянсен çурçĕрте тата кăнтăрта пурăннă чи авалхи аслашшĕсем темиçе ĕмĕр хушшинче пĕр-пĕринпе пĕрлешнинчен пуçланса кайнăскерсем, малашне вара пурăнма хĕвеланăç еннелле куçса пынă. Çав вырăнсенче—Вислăпа Одра (Одер) хушшинче пурăннă хăйсемпе тăванла халăхсемпе, пуринчен ытларах лугийски (е лигийски) йăхсемпе пĕрлешсе кайса, пирĕн эрăччен II—VI-мĕш ĕмĕрсенче хĕвеланăçĕнчи славянсене тума хунă. Кăнтăрта та хăйсемпе пĕр тăванла халăхсемпе—иллириецсен тата фракиецсен йăхĕсемпе, Дунай шывĕн тăрăхĕнче мĕн ĕлĕк-авалтанпах пурăннăскерсемпе пĕрлешсе кайса, V—VII-мĕш ĕмĕрсенче вара кăнтăрти славянсен йăхĕсене пуçласа янă. Вырăс халăхĕ, ытти славян халăхĕсем хушшинчи аслă халăх, чи авалхи е хĕвелтухăçĕнчи славянсем малалла аталаннинчен пуçланса кайнă халăх пулса тăрать.

* * *

Эпир летописçрен пĕлекен хĕвелтухăçĕнчи славянсен тĕп йăхĕсем, вырăс халăхне пуçласа янăскерсем, археологи кăтартса панă тăрăх, пирĕн эрăн малтанхи ĕмĕрсенчех йĕркеленме тытăннă. Çак вăхăтра вăтам Днепрпа Карпат тăвĕсем хушшинче склавенсем пурăнакан анлă территори; Тури Днепр тăрăхĕнче—пулас кривичсен облаçĕ; Припять тăрăхĕ—пулас дреговичсен облаçĕ; Десна тăрăхĕ—пулас северянсен облаçĕ тата Атăлпа Окан тури пайĕнче—вырăнти ăру ушкăнĕсен облаçĕ палăрма тытăннă.

Çав облаçсем пурте пĕр-пĕринпе тата çавăн пекех Хура тинĕс таврашĕнчи облаçсемпе те питĕ тачă çыхăнса тăнă. Çав облаçсенче, пуринчен ытларах вăтам Днепр таврашĕнчи йăхсем пурăннă вырăнсенче Рим укçисене тупни вĕсем кăнтăрăн авалхи колонийĕсемпе çыхăну тытнине кăтартса парать. Днепр таврашĕнчи йăхсем вара авалхи эллинсемпе скифсен культурине йышăнса, чылай çӳлте тăракан культура туса хунă. Çеçенхир тăрăхĕнче пуринчен ытларах алансемпе сарматсен нумай йышлă йăхĕсем пурăннă. Вĕсем авалхи Ольви, Херсонес Таврически, Пантикапей хулисене тата Хура тинĕс таврашĕнчи культурăна аталантарса урăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тунă. Çурçĕрти венед йăхĕсем те суту-илӳ тĕлĕшĕпе пуринчен ытларах Балтика тинĕсĕ урлă çыхăнусем тытма пуçланă. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн эрăн II-мĕш ĕмĕрĕ тĕлнелле Балтика тинĕсĕн хĕвелтухăçĕнчи пайне Венед заливĕ теме тытăннă.

Хура тинĕс таврашĕнчи пуян та культурăллă çĕршыв вăл вăхăтрах çурçĕрти ют халăхсене илĕртсе тăма тытăннă. Пирĕн эрăн II-мĕш ĕмĕрĕ пĕтнĕ тĕлелле унта гот йăхĕсен дружинисем пырса кĕнĕ; вăл вăхăтчен готсем Висла шывĕн анатри тăрăхĕнче пурăннă, вĕсене венедсем хĕсерленĕ. Вĕсем вăйсăрланса пыракан Рим империне хирĕç пулса иртнĕ тинĕсри тата типçĕр çинчи нумай çар экспедицийĕсене хутшăнма тытăннă. III-мĕш ĕмĕрте Хура тинĕс таврашĕнчи йăхсен—алансен, карпсен, бастарнсен, роксолансен, борансен, гелурсен т. ыт. дружинисем те — çакăн пек походсене нумай туса иртнĕ. Хура тинĕс таврашĕнче готсем хăйсене уйрăм государство тăвайман, вĕсем уйрăм йăхсене пайланса Хура тинĕс таврашĕнчи авалхи культурăна йышăннă, анчах та вĕсен хăйсен чĕлхе уйрăмлăхĕ сыхланса юлнă. Çапла вара нимĕç историкĕсем готсем кунта хăйсен культурине илсе килнĕ, кунта готсен славянсене пăхăнтарса тăнă аслă «держави» пулнă тенине истори пăрахăçа кăларать.

IV-мĕш ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем тĕлнелле готсем пĕр-пĕринпе тачăнрах пĕтĕçме тытăннă; ку вăхăтра Германарихри остготсем пуçпулса тăнипе вĕсем хăйсен кӳршисене хирĕç агрессиллĕ вăрçăсем пуçласа янă. Анчах та вăл вăхăтра пуçланса çирĕпленнĕ вăрçăллă-ăруллă икĕ союз: Хура тинĕс таврашĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче—славянсен тата вĕсемпе тăванла антсен союзĕ, хĕвелтухăçĕнче — алансен союзĕ çав агрессие хирĕç тăнă. Вара çав союзсене хирĕç пынă кĕрешӳре вăйсăрланса пынă готсем çĕнĕ тăшмана хирĕç—Азирен килсе тухнă гунсене хирĕç тăма пултарайман. Çакна пула готсен ют çĕршывран тухса тарма тивнĕ.

Антсен ăруллă союзĕ готсене хирĕç пынă вăрçă вăхăтĕнче IV-мĕш ĕмĕр тăршшĕнче пуçланса йĕркеленнĕ. Унăн составне Днепрăн вăтам пайĕнчи славянсем тата Карпат таврашĕнчи карп, костобок, арсиет тата роксолан йăхĕсем кĕнĕ пулмалла, мĕншĕн тесен çав йăхсене малашнĕ хăйсене уйрăм йăхсем вырăнне хурса асăнмаççĕ. Антсен союзĕн ăшĕнче çав пур йăхсем те пĕр-пĕринпе пĕрлешсе хутшăнса пынă та, вара хĕвелтухăçĕнчи славянсен кăнтăрти йăхĕсем—антсем пуçланса кайнă. Урăхла вĕсене «росомонсем» тенĕ, кунта ĕнтĕ «рос» сăмахăн тĕпĕ пулса тăрать. Çак ята антсен союзне кĕнĕ роксолансемпе арсиетсем панă. Çав вăхăтран (VI-мĕш ĕмĕртен) пуçласа ĕнтĕ хĕвелтухăçĕнчи славянсем хушшинче «Русь» ят пуçланса каять те часах вăл Хура тинĕс таврашĕнчи вырăнсен тулашĕнче те паллă пулса тăрать. «Российăн» е «росăн» çурçĕрти халăхне IV—VI-мĕш ĕмĕрсенче Сирире те пĕлнĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ «Русь» ят кăнтăрти славянсем хушшинче пуçланса кайнине кăтартса параççĕ. Каярахпа вара вăл ят пур хĕвелтухăçĕнчи славянсем е вырăс славянĕсем хушшине те сарăлнă. Ку ят пуçланса кайни Скандинавирен килнĕ дружинниксемпе—варягсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть. Авалхи Русь хăйĕн ятне çурçĕрти германецсенчен—шведсенчен илмен, пачах урăхла, вăл ят германецсене—готсене хирĕç кĕрешнĕ тапхăрта пуçланса кайнă.

Çак авалхи Русĕн культури е антсен культури (IV—VII-мĕш ĕмĕрсенче) эллинсемпе скифсен тата сарматсемпе алансен культурисен вырăнти йăлисене малалла аталантарса, хăйне уйрăм майсемпе çитĕнсе пынă та малашне вара Киев Руçĕн культури пулса тăнă. Вăл вара Византи культурин хăшпĕр йăлисене Болгари урлă йышăнса аталантарнă.

VII—VIII-мĕш ĕмĕрсенче савянсен йăхĕсем чи авалхи общинăсенчен тата вăрçăллă-ăруллă союзсен тапхăрĕнчен класлă обществăна куçма тытăннă та, малтанхи славянсен государствисене туса хунă. Хĕвеланăçĕнчи славянсен Само князь пуçпулса тăнипе Богемире княжество пуçланса кайнă, вĕсем аварсемпе франксене хирĕç кĕрешсе хăйсен никама пăхăнманлăхне ăнăçлăн хӳтĕленĕ. Кăнтăрти славянсен анатри Дунай тăрăхĕнче Болгари государстви йĕркеленсе кайнă. Çав вăхăт тĕлнеллех хĕвелтухăçĕнчи славянсен Карпат тăвĕсем таврашĕнче волынянсем пуçпулса тăнипе славян йăхĕсен анлă пĕрлешĕвĕ пуçланса кайнă. Вĕсен хăйсен никама пăхăнманлăхне аварсем (вырăс летописçĕ тăрăх «обрсем») тата хазарсем тапăннинчен хӳтĕлемелле пулнă. Аварсемпе хазарсем çав вăхăт тĕлнелле Хура тинĕс таврашĕнчи çеçенхирсене пырса тухнă та славянсен çĕрĕсене йышăнса илме пуçланă. Çак кĕрешӳ вăхăтĕнче ĕнтĕ вырăс йăхĕсем малалла пĕтĕçсе пырса вырăс халăхне пуçласа янă.

Араб писателĕсем çапла шутлаççĕ: VIII—IX-мĕш ĕмĕрсенче вырăс славянĕсен йăхĕсене политика тĕлĕшĕнчен малтанлăха пĕрлештерсе тăракан виçĕ центр пулнă: Киев хули таврашĕнчи вăтам Днепр тăрăхĕнче; Ильмень таврашĕнче, кунта тĕп хула Старая Руса, каярахпа вара Новгород пулнă пулмалла; юлашкинчен вара волынянсем пуçпулса тăнипе Карпат таврашĕнчи центр тесе калама пулать. Хазарсене хирĕç кĕрешнĕ май çак малтанхи государствăллă виçĕ пĕрлешӳ пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ те Киев государствин пуçламăшне, каярахпа пĕтĕм авалхи Руçе пĕрлештернĕскерĕн пуçламăшне туса хунă.

Вырăссен ĕлĕкхи истори наукинче вырăс государстви тата «Русь» ят хăй те мĕнле пуçланса кайни тĕлĕшпе «норман теорийĕ» текенскер пуçпулса тăнă. Çав теори тăрăх, хĕвелтухăçĕнчи славянсем пурăннă çурçĕрти облаçсене Скандинавинчи халăхсем—варягсем массăллăн колонизацилеме тытăннă пулать. Вĕсем вара уйрăм ушкăншерĕн кăнтăр еннелле куçса пырса Киева, Азов тинĕсĕ таврашне пырса кĕнĕ пулать. Çапла куçса пынă май вĕсем хĕвелтухăçĕнчи славянсем хушшинче пур çĕрте те, хутран-ситрен финн халăхĕсем хушшинче те пуçпулса тăракан хăйсен политикăллă центрĕсене тăвахăвăрнă пулать.

Вырăс историне çакăн пек суялантарма хăтланнине археологи тĕпренех аркатса тăкрĕ. Вăл çакна кăтартса пачĕ: Руçри вырăнти халăхсем хушшинче Скандинавирен килнĕ çынсем питĕ сахал пулнă, вĕсем кунта уйрăм дружинниксем е вĕсен отрячĕсем пулса килнĕ пулмалла. Варягсем хăйсемпе пĕрле Скандинавирен «государство» тата «Русь» ята илсе килме мар, вĕсем хăйсемпе пĕрле çӳллĕрех пусăмра тăракан культурăна та илсе килмен. Пачах урăхла, вĕсем Русь культурине хăйсем йышăннă та, вырăс славянĕсемпе хутшăнса кайнă.

Çапла ĕнтĕ, вырăс халăхĕ тата вырăс халăхĕн чи авалхи аслашшĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех хăйсен çĕршывĕн хуçисем пулса тăнă. Хăйсен культурин аталанăвĕ тĕлĕшĕпе вĕсем Вăтам тата Çурçĕрти Европăра пурăнакан халăхсемпе йăхсенчен юлса пыман. Истори тăршшĕнче вĕсем хăйсен политика тĕлĕшĕнчи тата культура тĕлĕшĕнчи никама пăхăнманлăхне туса пырса тата вĕсене пур тĕрлĕ агрессорсенчен те: кăнтăрти çеçенхирсенче куçса çӳрекен халăхсем тапăннинчен, нимĕçсен «йытă-рыцарьсем» тапăннинчен, вырăссен ĕмĕрхи çĕршывĕсене туртса илме пиленнĕ шведсенчен хӳтĕленĕ.

Хĕвелтухăçĕнчен тутарсем капланса килни авалхи вырăс халăхĕн политикăпа культура тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхне пĕтерсе лартнă. Унăн хĕвеланăçĕнчи тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи çĕрĕсене Литвапа Польша тытса илнĕ те, унта вара Белоруссипе Украина пуçланса кайнă. Çав вăхăтрах çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи Русь Мускав тавра пĕтĕçсе пырса ериненех хăйĕн нациллĕ государствине туса çирĕплетнĕ.

Белорусси халăхĕн аслашшĕсем хĕвелтухăçĕнчи авалхи славянсен Полесьере пурăннă дреговичсем, Сож шывĕ тăрăхĕнче пурăннă радимичсем тата полоцкпа кривичсен хăшпĕр йăхĕсем пулаççĕ. Украина халăхĕсен аслашшĕсем Карпат таврашĕнче пурăннă полянсен, волынянсен е бужансен, хорватсен, кăнтăрта пурăннă тиверецсемпе уличсен авалхи йăхĕсем, Деснапа Сейм шывĕсем тăрăх пурăннă северянсен хăшпĕр йăхĕсем тата полянсемпе кӳршĕллĕ пурăннă древлянсем пулаççĕ. Белоруссипе Украинăра хăйсене уйрăм нациллĕ чĕлхесем пуçланса кайни XVI-мĕш ĕмĕрсенчех палăрнă. Великоруссен авалхи аслашшĕсем Днепрăн тури пайĕнче, Хĕвеланăç Двина таврашĕнче тата Атăл çинче пурăннă çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи кривичсен, Ока шывĕн тури пайĕнче пурăннă вятичсен йăхĕсем, çавăн пекех тата Ильмень таврашĕнчи (Новгородри) славянсем пулаççĕ. Малалла аталанса, урăх вырăнсене куçса пынă май, вĕсем финсен хăшпĕр йăхĕсене те хăйсемпе пĕрлештерсе пынă.

Çапла ĕнтĕ, Киев государстви тапхăрĕнчи авалхи вырăс халăхĕнчен тăванла виçĕ халăх: белоруссем, великоруссем тата украинецсем тухса кайнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем кашниех пĕрлĕхлĕ аслă Совет Союзĕн составне кĕрсе, хăйсене уйрăм государствăна пĕрлешсе тăраççĕ, кашни хăйсен культурине—форми тăрăх нациллĕ, содержанийĕ тăрăх социализмлă культурине аталантарса пыраççĕ.

Совет Союзĕпе Китай тунă договор çинчен Бирнс калани

ВАШИНГТОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс пичет представителĕсемпе калаçу иртернĕ. Вăл çав калаçура Совет Союзĕпе Китай договорне ырланă. Çав договор Пĕрлешнĕ нацисем пĕрлĕхлĕ пулса пĕрне-пĕри пулăшса тămалли ĕçсен тĕслĕхĕ пулса тăрать, тенĕ вăл.

Пичет представителĕсем Бирнса çав договора ăнлантарса пама ыйтса çыру çырса панă. Бирнс çав çырăва хирĕç çапла каланă: «Китай республикин наци правительствипе Совет Союзĕн правительстви алă пуснă договор, çавăн пекех тата договорпа пĕрле тунă килĕшӳсем Китайпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас ĕçре малалла паха утăм ярса пусни пулать, тесе шутлатăп эпĕ. Мускаври калаçусем мĕнле пыни çинчен пире пĕрмаях пĕлтерсе тăчĕç, эпир Мускавра тунă договорпа килĕшӳсене саламласа ырлатпăр, вĕсем Пĕрлешнĕ нацисен членĕсем мирлĕ тапхăрта та, вăрçă вăхăтĕнче те пĕрлĕхлĕ пулса пĕр-пĕрне пулăшса пымаллине кăтартакан тĕслĕх пулса тăраççĕ».

Америкăри радиообозреватель Совет Союзĕпе Китай договорĕ çинчен

САН-ФРАНЦИСКО, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан договора ăнлантарса панă май Сан-Францискăри радиообозреватель Беннет çапла калать: Совет Союзĕпе Китай договорĕнчи условисем çав договор Инçетри Хĕвелтухăçĕнче мирлĕ пурнăçа чăнлăпех сыхласа тăма пултарнине кăтартаççĕ. Çав договорăн пункчĕсем нумайĕшĕ мир тăвассине шантараççĕ.

Малалла радиообозреватель Совет Союзĕпе Китай тунă договорпа килĕшӳсен условийĕсене кĕскен каласа панă, унтан вара вăл уйрăмăнах çакна палăртса каланă: Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи хальхи çыхăнусем халăхсем хушшинчи мирлĕ пурнăçа туслă пурăнсан кăна тума пултарнине кăтартаççĕ.

ЛОНДОНРИ РАДИО ССР СОЮЗĔПЕ КИТАЙ ТУНĂ ДОГОВОР ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио ССР Союзĕпе Китай тунă договора Великобританире те, США-ра та ырлани çинчен пĕлтерет. Лондонри радион дипломатиллĕ обозревателĕ çапла палăртать: çак договорăн тĕллевĕ Инçетри Хĕвелтухăçĕнче харкашусен сăлтавне пĕтерет тата мир туса парать. Договорта çĕршывсен никама пăхăнманлăхĕ, пĕрпĕрин территорийĕн пĕрлĕхĕ тата пĕр-пĕрин шалти ĕçĕсене хутшăнманни çинчен каланă. Пĕтĕмĕшпе илсен, ку договор çирĕп мирĕн пĕр пайĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен ăна Японин çар тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне аталанма парас мар тесе тунă, вăл Инçетри Хĕвелтухăçне урăхлатса çĕнетме пулăшать.

КИТАЙ ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ ДОГОВОРĔ ÇИНЧЕН

ЧУНЦИН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăхпа союз çинчен договор тунине Чунцинра тухакан мĕнпур хаçатсем ырлаççĕ. Хаçатсем договора пĕтĕмпех пичетленĕ.

«Чжуняньжибао» хаçат çапла çырать: Паян питĕ паха документсене пичетленĕ, çав документсем историре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕсем çак вăрçа вĕçлеççĕ. Паянтан вара Хĕвелтухăç Азире мир çирĕп никĕс çинче пулать. Çавăнпа та Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан договор пĕтĕм этемлĕх историйĕшĕн те питĕ паха пулса тăрать. Сталин Генералиссимуспа Чан Кай-ши Генералиссимус пĕрпĕрне лайăх ăнланнă, Япони агрессине хирĕç кĕрешес ĕçре пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр тăнă. Совет Союзĕпе Китай тунă договор çĕнĕ вăтăрçуллăх самана пуçласа ярать. Япони агрессийĕн юлашкийĕсем çывăх вăхăтрах пĕтсе лармалла. Пире çак вăрçа вĕçлеме парас мар тесе тăрăшнă çынсем пурте пĕтсе ларĕç. Совет Союзĕпе Китай договорне çирĕплетни пирĕн çĕршывсем малашнехине курса тăнипе тата вĕсем ырă кăмăллă пулнине лайăх палăртса пачĕ. Çав договорăн пахалăхне эпир халĕ ĕнтĕ тĕрĕс хаклама пултаратпăр. Вăл договора алă пусни Китайра, Хĕвелтухăç Азире тата пĕтĕм тĕнчере мир тума май парать. Совет Союзĕ Китай умне лартнă требованисем пурте тенĕ пекех экономикăллă требованисем кăна пулса тăраççĕ, политикăллă требованисене Совет Союзĕ хăйне Япони тапăнасран сыхлас шутпа çеç лартнă. Китай халăхĕ савăнма пултарать. Пĕр-пĕринпе ырă кăмăлпа çыхăнса ĕçлени икĕ çĕршывшăн та пĕр пекех усăллă. Совет Союзĕ малашне Китайăн центральнăй правительствине пулăшасси çинчĕн пĕлтерчĕ. Эпир ăна Китая пĕрлештерме тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Совет Союзĕпе Китай договорĕ Совет Союзĕ Хĕвелтухăç Азире çирĕп мир тума тăрăшнине пĕлтерет. Эпир çакна нихăçан та манмăпăр, Японипе Китай хушшинчи вăрçă пуçланнăранпах Совет Союзĕ Китая пулăшса тăнине те манмăпăр».

Совет Союзĕпе Китай тунă договор мĕнпур ыйтусене калама çук лайăх çутатса парать, иккĕленмелли нимĕн те юлмасть, тесе çырать «Дагунбао» хаçат. Вăл питĕ усăмлă, вăл дипломати историйĕнче çĕнĕ самана пуçласа ярать. Çав договорăн кашни статьи, кашни сăмахĕ, кашни саспаллийĕ тĕрĕс. Тĕрĕссипе каласан, Японие çĕнтерни Китайшăн пĕтĕмпех çĕнтерни пулмасăр та юлма пултаратчĕ, Совет Союзĕпе Китай договор туни пире Японие пĕтĕмпех çĕнтерме май парать. Эпир пĕрре çапсах хамăр тăшмана пĕтерсе лартрăмăр тата хамăра тус тупрăмăр. Малашне ĕнтĕ пирĕн çĕршыв Совет Союзĕпе тата пĕтĕм тĕнчери мире юрата-кан çĕршывсемпе пĕрле утса пырĕ.

«Чжуняньжибао» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Совет Союзĕпе Китай союзлă договор туни малашне çĕнĕ вăрçăсем пуçланассине пĕтерес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнать. Çав договор пирĕн икĕ çĕршыв хушшинчи çыхăнусене туллин çутатса пачĕ. Совет Союзĕн Китай тĕлĕшпе тытса пыракан политики вăл пире пурлăхпа мораль тĕлĕшĕнчен тулли пулăшу парасси пулса тăрать. Хĕвелтухăç Азире эпир мире сыхлама тăрăшни малашне Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхпа ырă кăмăллă çыхăнусем çинче никĕсленсе тăмалла.

ДЕ ГОЛЛЬ—АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ

ВАШИНГТОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент тата де Голль генерал иккĕшĕ пĕрле çапла пĕлтернĕ: вĕсем пĕр-пĕрне тĕрлĕ ыйтусем тĕлĕшĕпе хăйсен шухăшĕсене каласа панă. США-н государство секретарĕ Бирнс тата Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо çав вăхăтрах политикăпа экономика ыйтăвĕсене туллин те уççăн сӳтсе-явнă.

Трумэнпа де Голль вăрçă хыççăнхи мир тăвас ĕçре Франципе США умĕнче тăракан задачăсем тĕлĕшне тĕплĕн каласса татăлса килĕшнĕ. Вĕсем икĕ çĕршыв хушшинче пĕр-пĕрне ăнланса тата тачăрах çыхăнса ĕçлеме хатĕррине каласа панă.

ВАШИНГТОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 24-мĕшĕнче Шурă Çуртра Трумэн де Голле главнăй командор степенĕнчи «За заслуги» орден, Бидона —командор степенĕнчи çав орденах панă.

Çав кунах де Голль аслă степеньри Хисеплĕ Легион орденĕсене Америка çарĕн штаб начальникĕ Маршалл генерала, США-н сывлăш вăйĕсен командующине Арнольд генерала, Америка флочĕн главнокомандующине Кинг адмирала тата президентăн личнăй штабĕн начальникне Леги адмирала панă.

РОЛЯ-ЖИМЕРСКИЙ МАРШАЛ КОРРЕСПОНДЕНТА КАЛАСА ПАНИ

ВАРШАВА, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри хаçатсем Польпресс агентствин корреспонденчĕ Польша маршалĕпе М. Роля-Жимерскипе калаçнине пичетлесĕ кăларнă.

Корреспондент çапла ыйтнă: халь мĕншĕн, вăрçă пĕтнĕ пулсан та, Польша çарне çынсем мобилизацилеççĕ? тенĕ. Маршал çапла каланă: Польша çарне пуринчен ытла Висла леш енчи çынсенчен тунăччĕ, анчах вăрçă Висла шывĕ патĕнчен наступлени пуçласа янă хыççăн 4 уйăх иртсен тин пĕтрĕ, çавăнпа Висла шывĕн сулахай енче пурăнакан граждансемпе сылтăм енче пурăнакан граждансене çара илес ĕçре пысăк танмарлăх пулса тăчĕ. Çав танмарлăха халь çынсене çара мобилизациленипе тикĕслетпĕр. Кунсăр пусне, нимĕçсем оккупацилесе тăнă 6 çул хушшинче çамрăксем ӳссе çитрĕç. вĕсене халиччен çара илмен, вĕсем çара кайма хатĕрленмен те. Роля-Жимерский çапла каланă: тылра ĕçлеме мобилизациленĕ хĕрарăмсене чи малтан киле ярăпăр, тенĕ.

Роля-Жимерский малалла çапла каланă: халăх пĕрлĕхĕн правительствине ытти правительствăсем йышăннă май Польша çарĕн кадровăй офицерĕсем нумайĕшĕ халь Польша çарне куçаççĕ, вĕсене ют çĕршывсенчи провокациллĕ çар командованийĕ улталанă пулнă. Поляксен эмиграцире ĕçленĕ «правительстви» тата реакциллĕ командованийĕ çĕнĕ Польшăна хирĕç пропаганда тăвать пулин те, ют çĕршывсенче пурăнакан штаб офицерĕсен пĕр пайĕ халь Польшăна куçасшăн.

Халăх пĕрлĕхĕн правительствине хĕвеланăçĕнчи державăсем йышăнсанах эпир Британи правительствинчен пирĕн офицерсене йышăнма ыйтрăмăр, çав офицерсене эпир эмиграпире пурăнакан поляксен чăçĕсене Польша çарĕн главнокомандованийĕ ячĕпе Польшăна илсе килме ярасшăн. Британи правительствинчен халиччен те ответ килмерĕ-ха. Эпир çакна пĕлетпĕр: поляксен эмиграцире пулнă «правительствин» хаçачĕсемпе деятелĕсем демократиллĕ Польшăна хирĕç тата çĕнĕ Польша çарне хирĕç элеклĕ пропаганда сараççĕ. Вĕсем тĕрлĕ киревсĕр майсемпе, Польшăна таврăнма кăмăл тăвакан салтаксемпе офицерсене хупма концентрациллĕ лагерьсем туса та çав салтаксемпе офицерсене хăйсен патриотла тивĕçне пурнăçа кĕртме чарасшăн. Польшăн эмиграцири çар чăçĕсене йышăнмашкăн Польша главнокомандованийĕн представителĕсем çывăх вăхăтрах Англие тухса кайма пултарĕç тесе шанса тăратпăр эпир, тенĕ Роля-Жимерский.

Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусас умĕн

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио августăн 27-мĕшĕнче ирхине çапла пĕлтернĕ: американецсен Хэлси адмирал командир пулса ертсе пыракан 3-мĕш флочĕ Сегами заливĕнче тăрать, вăл кирек хăш самантра та Токио заливне кĕме хатĕр. Çитес 12 сехетре союзниксен карапĕсем Токио заливне кĕмелле.

Августăн 27-мĕшĕнче ирхипе прех Япони делегачĕсем американецсен «Миссури» линкорĕ çине пынă. Вĕсем американецсен «Николас» ятлă миноносецĕ патне Япони миноносецĕпе пынă, вара «Николас» çинчен вĕсене «Миссури» линкор çине илсе кайнă. Япони делегачĕсене ухтарнă, вĕсенне самурай хĕçĕсене илнĕ. Калаçнă хыççăн вĕсем союзниксен офицерĕсемпе пĕрле хăйсен миноносецĕ çине каялла таврăннă.

Союзниксен Япони утравĕсен çыранĕсем патĕнче тăракан карапĕсен колонни темиçе миля тăршшĕ тăсăлса лараççĕ. Токио заливне кĕмелли карапсем пурте хатĕр тăраççĕ. Американецсен «Миссури» линкорĕпе юнашар «Георг», «Герцог Йоркский», «Айова» тата союзниксен ытти суднисем те Сагами заливĕнче тăраççĕ, вĕсем Хэлси адмиралтан малтанхи карапсем хыççăн Токио заливне кĕме приказ кĕтсе тăраççĕ. Япони çĕрĕ çине августăн 28-мĕшĕччен анма пуçласси çинчен калакан сведенисене ку таранччен илмен-ха.

Союзниксен çарĕсем Японие анни

САН-ФРАНЦИСКО, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио çапла пĕлтерет: Манилăран пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен оккупациллĕ çарĕсен пĕрремĕш ушкăнĕ паян, Токио вăхăчĕпе 9 сехетре ирхине, Япони çĕрĕ çине аннă.

УЭЙВЕЛЛ ЛОНДОНА ТУХСА КАЙНИ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индин вице-королĕ Уэйвелл лорд Дели хуинчен Лондона тухса кайнă.

Политика деятелĕсем шутланă тăрăх, Уэйвелл Англи правительствипе калаçмалли тĕп ыйту çак пулать: конституци тĕлĕшĕпе улшăнусем тунин тĕллевĕ ларутăрăва йĕркелесе çирĕплетесси пулать-и, е ку ыйтăва татса пама вице-король çумĕнчи ĕç тăвакан совета улăштарма тăрăшмалла-и.

СОВЕТ ВОИНĔСЕНЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ОРДЕНĔСЕМПЕ НАГРАДĂЛАНИ

ПРАГА, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакин главнăй штабĕн начальникĕ дивизи генералĕ Бочек Хĕрлĕ Çарăн нумай боецĕсемпе офицерĕсене нарп оборонин министрĕ ячĕпе Чехословакин Çар Хĕресĕпе тата Чехословаки медалĕсемпе наградăланă. Вĕсене хĕвелтухăçĕнче Чехословакин çарĕсем организациленĕ чухне паха ĕçсем тунăшăн, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пĕрле çапăçнă чух пулăшнăшăн тата паттăрлăх кăтартнăшăн наградăланă.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви «Колхоз театрĕн библиотеки» ятлă серие ялти драмкружоксем валли çĕнĕ пьесăсем кăларма пуçларĕ. Çак серипе чăваш драматургĕ Н. Айзман çырнă «Лиза Короткова» ятлă пьесăна пичетлесе кăларчĕ. Пьеса тиражĕ 2.000 экземпляр, хакĕ 4 тенкĕ.

Чăвашгосиздатăн ача-пăча литературин секторĕ вăтам çулхи ачасем валли чăваш халăх поэчĕн орденоносец С. В. Эльгерăн сăввисене уйрăм кĕнеке туса кăларчĕ. Кĕнеке тиражĕ 5.000 экземпляр, хакĕ 2 тенкĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

ЧĂВАШСЕН ПЕДАГОГИКА ИНСТИТУЧĔПЕ УЧИТЕЛЬ ИНСТИТУЧĔ истори, чĕлхепе литература, физикăпа математика тата естествознанипе географи факультечĕсен 1-мĕш курсне тата аслăрах курсĕсене илме çырнă заявленисене халь те йышăнаççĕ.

Педагогика институтне çитĕнсе çитнине кăтартакан аттестат илнисене, Учитель институтне вăтам шкулăн 10-мĕш класĕсĕнчен вĕренсе тухнине кăтартакан свидетельство илнисене йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем Шупашкарта августăн 27-мĕшĕпе сентябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 34, Пединститут, в Приемную комиссию.

2—2.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çутĕç управленийĕ Етĕрнери педагогика училищин библиотека отделенийĕн 1-мĕш класне вĕренме илет.

Унта вĕренме кĕмелли условисем шкул отделенине вĕренме кĕмеллисем пĕкех. («Красная Чувашия» хаçатăн кăçалхи июлĕн 7-мĕшĕнче тухнă номерне пăхăр).

Заявленисене сентябрĕн 11-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Экзаменсем сентябрĕн 11-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Вĕрентме сентябрĕн 17-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Вĕренме илнисене педучилище столовăйĕнче апат çитереççĕ, стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ.

... АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ ...

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. ... 42 п. л.